*АЯКРИ ЕНТЕШСЕМ*

# Парижа кайма хатĕрленетпĕр

**Етĕрне районĕнчи Хурамалăх маншăн темле асамлă ял пек туйăнать: кунта юлашки вăхăтри питĕ хитре, хăватлă саслă икĕ чăваш юрăçи çуралнă – Алексей Николаев тата Ирина Шоркина. Эстрадăпа кăсăкланакансем Сывлăм Алешĕ тесе пĕлекен юрăçпа эпир вулакансене пĕлтĕр паллаштарнăччĕ, пирĕн паянхи хăна – Ирина Шоркина. Вăл та хамăр республикăра пурăнмасть, тахçанах Мускавра тымар янă. Кĕскен ун çинчен: Шупашкарти Федор Павлов ячĕллĕ музыка училищинче (1990-94), Чулхулари Михаил Глинка ячĕллĕ консерваторире (1994-99) ятарлă пĕлÿ илнĕ; специальнăçĕсем – «Вокал педагогĕ» тата «Опера юрăçи»; хальхи вăхăтра «Москонцерт» патшалăх концерт учрежденийĕн юрăçи; мăшăрĕ – Николай Михайлович Кузьмин; вĕсен йĕкĕрешсем – Анастасия тата Александр – çитĕнеççĕ.**

**– Ирина, юлашки çулсенче мĕнле проектсем пурнăçа кĕртме май килчĕ?**

– Хальччен пулманни – хам тĕллĕн икĕ пысăк концерт йĕркелерĕм, вĕсенче солистка кăна мар, режиссер та хамах пултăм. Малтанласа шикленĕччĕ, çапах япăхах мар иртрĕç, иккĕмĕшне мухтарĕç те. Анчах та юратнă «Москонцертсăр» тата «Катюша» ансамбльсĕр çаксене пурнăçлайман пулăттăм.

**– «Катюша» çинчен тĕплĕнрех пĕлме юрать-и, ку мĕнле ансамбль?**

– Мускав облаçĕнчи Краснознаменск хулинчи РОСТО уйрăмĕ çумĕнче йĕркеленнĕ ансамбль вăл – çарпа патриотизм юррисен ансамблĕ. Ансамбльти арçынсем – çар çыннисем, юрă-кĕвĕ вĕсен хобби, эпĕ вара унта тĕп солист. Ансамбльпе нумай мероприятие хутшăнатпăр, ытларах чухне Раççей Федерацийĕн Хÿтĕлев министерстви йыхравланипе. Акă виçĕ çул ноябрĕн 7-мĕшĕнче Хĕрлĕ площадьре 1941-мĕш çулта иртнĕ парада асăнса йĕркелекен мероприятие хутшăнтăмăр. Пĕлтĕр акă ансамбль Европăна кайса килчĕ гастроле, унта вĕсене Париж мэрĕ асăрханă. Ансамбль ертÿçи Константин Солдатов ман пирки каланă, пирĕн тата мĕнлерех саслă солистка пур тесе ĕнтĕ, мэр Интернетра манăн юрăсене итленĕ хыççăн «Катюшăна» кăçал ятарласах йыхрав турĕ.

**– Çĕнĕ юрăсем те пайтах-тăр?**

– Паллах. Композиторсем хăйсем те сĕнеççĕ, апла пулсан вĕсем манра чăн юрăça кураççĕ. Ытларах чухне хам шыратăп, ĕлĕкхи,



*«Катюша» ансамбль, варринче – Ирина Шоркина*

*И. Шоркинăн архивĕнчи сăн ÿкерчĕксем*

манăçнă, ман сасă валли çырнă юрăсене. Мана ку тĕлĕшпе тусăм, пулăшаканăм, вĕрентекенĕм Александр Шиманов виртуоз-музыкант пулăшать. Вăл питĕ ăста баянист – «Москонцертра» 30 çул ытла! Раççей тава тивĕçлĕ артисткипе Александра Стрельченкăпа нумай çул хушши ĕçленĕ. Эпир унпа пилĕк çул ытла пĕрле ĕçлетпĕр, 200 ытла юрă хатĕрлерĕмĕр. Эпĕ концертра мĕнле юрланине вăл хаклани маншăн питĕ пĕлтерĕшлĕ. Ирина Шоркинăна ытларах романс юрăçи пек пĕлеççĕ. Ку енĕпе вара мана Раççей тава тивĕçлĕ артистки Иветта Болотина пианистка пулăшса пырать. Вунпилĕк çул ытла пĕрле эпир унпа, вăлах мана вырăс романсне юратма пулăшрĕ.

**– Кĕçех санăн çуралнă кун, ун ячĕпе пĕр-пĕр концерт ирттерме палăртман-и?**

– Унпа çыхăнтармасăр эпĕ кăçала каллех икĕ пысăк концерт палăртнă: çуркунне тата кĕркунне. Ытти артистсемпе вун-вун концерт пулĕ. Тата, каларăм, Парижа каясси, унти итлекенсене савăнтарасси.

## Юрăç пулмах çуралнă...

**– Ирина, ăçтан, камран сан çакăн пек хитре те мăнаçлă сас? Тăванусенчен кам та пулсан юрăç тавраш çук-и?**

– Манăн кукамай Анастасия Николаевна Николаева питĕ вăйлă саслă пулнă, вăл юрланине тепĕр ялта та илтнĕ теççĕ. Анне Евгения Николаевна хитре юрлатчĕ, атте Леонид Петрович купăс калать. Атте мана пĕчĕк чухнех купăс каласа юрлаттаратчĕ.

**– Эсĕ хăв юрăç пулма пултарасса хăçан ăнкарса илтĕн?**

– Вунпиллĕкре. Ун чухне пирĕн «Ленинская искра» хуçалăха темле делегаци килнĕччĕ, пысăк уяв пулчĕ, телевидени ÿкерчĕ. Эпĕ те юрларăм, килнĕ хăнасем асăрхарĕç, аттепе аннене мана музыка енĕпе яма ыйтрĕç. Çавăн чухне ăшăмра юрăç пулас шухăш тĕвĕленчĕ те. 9-мĕш класс хыççăн Шупашкарти музыка училищине те килнĕччĕ, анчах иртерех тесе каялла ячĕç. 11-мĕш хыççăн унтах çул тытрăм.

**– Эсĕ хăвăн чи пысăк Вĕрентекенÿ вырăнне хурса кама ытларах хисеплетĕн?**

– Манăн вокал енĕпе питĕ вăйлă педагогсем пулнă. Чи пĕрремĕшĕ – Агреппина Ивановна Иванова. Вăл мана кирлĕ нотăна илме вĕрениччен нушалантаратчĕ, тепĕр чухне макăрнисем те пулнă. Вăл пуçламăшне вĕрентнĕ – чи кирлине! Унтан эпĕ сассăма пула консерваторине кĕтĕм. Ку Агреппина Ивановнăн тÿпи, пĕр сăмахсăрах, вăл ман сасса çапла аталантарма пултарчĕ. Манăн иккĕмĕш педагог – Валерия Андреевна Воронова. Вăл мана хăйĕн хĕрне юратнă пекех юрататчĕ. Вокал шкулне пĕтернĕ çын нихăçан та тÿрех артист пулса тăмасть, ку вăл вăхăт иртнĕçемĕн, опыт пухнăçемĕн килет. Мана пурнăçра лайăх музыкантсемпе ăнăçрĕ, вĕсем паянхи кун та пулăшса пыраççĕ. Эпĕ нихăçан та вĕренме пăрахман, профессионалсенчен куллен вĕренетĕп, ку мана уйрăм киленĕç кÿрет.

**– Сан ача чух кумирсем пулнă-и?**

– Музыкăра кумир тавраш пулман пуль. Пирĕн шкул килтен пилĕк çухрăмра вырнаçнăччĕ, çавăнпа та ирех тăмаллаччĕ. Камăн ир тăрас килтĕр? Атте эпир асапланнине кура «Урал» радиоприемник илнĕччĕ, ăна пиллĕк çурăра яратчĕ те «Маяк» хумĕ çинче Зыкина, Лемешев, Нечаев, Воронец, Кобзон юрланисене илтсе вăранаттăмăр. Çур сехет итлесе выртаттăмăр, унтан гимн янăраса каятчĕ те сиксе тăраттăмăр, çăвăннă, тăхăннă, апатланнă та – шкула.

**– «Москонцерта» мĕнле лекнĕ эс?**

– Мăшăрăм хистенипе. Вăл мана юрлама ÿкĕте кĕртрĕ. «Сассăррисем, ятарлă пĕлÿсĕррисем сцена çине тухаççĕ, эсĕ çакăн пек саспа бизнесра – кайран хăвна каçармăн вĕт», – терĕ. «Тулькĸăш малтан ывăл çуратса пар, эпĕ сана пур енĕпе те пулăшса пырăп», – терĕ тата. Ывăл çеç мар, ывăлпа хĕр – йĕкĕрешсем те – пулчĕç. Паян Ирина Шоркина «Москонцертра» чи нумай юрлакансенчен пĕри.

## Облаçри чăвашсен ертÿçи

**– Ирина, сана Мускав облаçĕнчи чăвашсен наци культура автономине ертсе пыма шанчĕç. Ку обществăлла ĕçе пурнăçласа пыма нумай вăхăт, вăй кирлĕ, хăвах килĕшрĕн-и, чăнне кала-ха?**



*Ирина РФ Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕпе Сергей Лавровпа*

– Чăннипе, тÿрех килĕшмерĕм. Самай нумай вăхăт та, вăй та кирлине ăнлантăм малтанах, ку пысăк яваплăх-çке тата. Анчах та ыйтакансем, ÿкĕтлекенсем те чылайăн пулчĕç. Вара килĕшесех терĕм, хамăр тумасан кам тутăр-ха ку ĕçе?

**– Сана пулăшакансем пур-и?**

– «Тăван çĕршывăн ывăлĕсем» организацири Чăвашран тухнă офицерсем питĕ пулăшаççĕ. Уйрăмах Вениамин Шашкаровпа Олег Пильщиков. Тата манăн мăшăрăм. Вăл чăваш мар, арăмĕ çеç чăваш, анчах питĕ нумай пулăшать. Уйрăмах укçа-тенкĕ енĕпе, унсăрăн мана йывăр пулатчĕ. Юлашки вăхăтра çамрăксем кăсăкланма пуçларĕç, шăнкăравлаççĕ, тĕрлĕ проектсем сĕнеççĕ.

**– Çак ĕçре сиксе тухнă йывăрлăхсем çинчен мĕн калăн?**

– Чи пĕрремĕшĕ вăл – укçа-тенкĕ йывăрлăхĕ. Патшалăх пулăшăвĕ илме пире иртерех-ха, автономи çамрăк. Спонсорсем çук. Пирĕн тĕллев – облаçри чăваш усламçисене пĕрлештересси те.

## Çемье – ман çирĕп тыл

**– Кăштах юрă-кĕвĕ тĕнчинчен пăрăнса илер-ха, санăн мăшăру мĕн ĕçлет? Ăçта паллашнă эсир?**

– Унăн хăйĕн фирма. Музыкăпа çыхăнман, çемьере пĕр юрăç пулни те çитет... Унпа эпир ĕçе пула паллашрăмăр. Мускава килсен хамăн профессипе йĕркеллĕ ĕç тупасси пулмарĕ, икĕ çул ытла эпĕ юрламасăр пурăнтăм. Бизнеса кĕрсе кайрăм, Интернет валли кабельсем сутаттăм. Тĕрĕссипе каласан, аванах пулатчĕ. Коля манăн конкурентчĕ. Вăл эпĕ юрăç пулнине пĕлчĕ те, мана сцена çине тухма, таврăнма пулăшрĕ.

**– Мĕне эсĕ хăвăн пурнăçунти чи пысăк çитĕнÿ тесе шутлатăн?**

– Хамăн йĕкĕреш ачамсене. Анастасияпа Александр халь 5-мĕш класра вĕренеççĕ. Вĕсем манăн чи лайăх юррăмсем. Унтан хамăн çемьене. Кайран тин профессине, ĕçе. Тем тесен те çемье пĕрремĕш вырăнта. Çемьере йăлтах йĕркеллĕ пулсан çеç, çемьери тыл çирĕп пулсан çеç карьера пирки шутлама пулать, тыл çирĕп чух карьера тăвасси çăмăлрах.

**– Эсĕ апат пĕçерме кăмăллатăн-и?**

– Эпĕ апат пĕçерме юрататăп, пĕр-пĕр ресторантинчен те тутлăрах пулать. Уйрăмах кукăльсем, борщ, салатсем, кăвакал, хур ытармалла мар пулаççĕ. Эпир Мускав облаçĕнче çурт турăмăр, унта тăтăшах тус-юлташсене, ĕçтешсене чĕнетпĕр. Эп пĕçернĕ икерчĕ, хуран кукли пурне те килĕшет.

**– Упăшкуна хуран куклисĕр пуçне тата мĕнле чăваш апат-çимĕçĕпе сăйласа курнă?**

– Хуплу, какай шÿрпи, йÿçĕхнĕ сĕтрен сивĕ яшка, анне вĕрентнĕ пек кукăльсем – темĕн те пĕр хатĕрлесе çитернĕ. «Мана ăнăçрĕ пурнăçра, арăм питĕ тутлă пĕçерет», – тет вара вăл чăваш апатне мухтаса.

**– Тавах каласушăн. Ăнăçу сана!**

✎ Владислав ДМИТРИЕВ

*ШУХĂШЛАР-ХА, ТĂВАНСЕМ*

# Ыранхине асра тытар

Ăслă кĕнекесем те тĕрлĕрен пулаççĕ çав. Калăпăр, пĕринче çынсене паянхи кунпа киленсе пурăнма вĕрентеççĕ, иртнине манмалла, пуçран кăларса пемелле-мĕн, ыранхи пирки вара ыран шутлăпăр иккен. Тепринче вара иртнине асра тытмалла, тунă йăнăшсене тĕпе хурса, малашне ăслăрах пулса пурăнмалла тенĕ. Виççĕмĕшĕнче ыранхи куна ытларах тимлĕх уйăрма хушаççĕ: ыран лайăх пултăр тесен паян уяса пурăнмалла иккен.

Пурин шухăшĕпе те килĕшме пулать пек. Кашни хăй суйлать-çке мĕнлерех пурăнмаллине. Пĕрисем ав хăйсемшĕн пурăнатпăр теççĕ: ача та çуратма васкамаççĕ е пачах та çуратас темеççĕ, тĕнче курса çÿреççĕ, хитре тумланаççĕ, тутлă çиеççĕ – чăннипех те паянхи кунпа пурăнаççĕ, ватлăхра хăйсене кам пăхасси çинчен шутламаççĕ те. Теприсем хăйсем çинчен мансах ачисемшĕн пурăнма пуçлаççĕ: йăлтах тĕпренчĕксем валли, ниçта тухмасăр-каймасăр, ачасене малашне çăмăлрах пултăр тесе перекетлĕн кун кунлаççĕ. Иртнине манакансем те çук мар, вĕсем «çĕнĕ» пурнăç пуçлатпăр тесе хăйсен тăванĕсене, тăван ялне-кĕтесне манаççĕ, ачалăхпа-çамрăклăхпа çыхăнтаракан кантрана татаççĕ... Çапла, тĕрлĕрен пурăнса ирттерме пулать пурнăça...

Эп сире мĕнле пурăнмаллине вĕрентесшĕн мар, анчах ыранхи çинчен кăштах ытларах шутласа пăхма хистессĕм килет. Иртнине те манмалли марри çинчен эп каламасăрах пĕлетĕр, анчах ун пирки тепрехинче сăмах хускатăпăр.

Ыранхи тесе ачасене шута илсе çеç каламастăп, ыран эпир хамăр та пурăнатпăр-ха, пĕтĕмĕшле, пурнăçăмăрăн пĕтĕм енне тĕпе хурса пуçаратăп çак калаçăва. Çапах ачасен, мăнуксен ĕмĕрĕсем пирĕннинчен вăрăмрах пулассине шута илсе ыйтăвăма çапла лартасшăн: мĕн хăваратпăр, мĕнле пурнăç сунатпăр эпир хамăрăн ачамăрсене?

Калăпăр, мĕнле çутçанталăк, мĕнле тавралăх – уй-хирсем, вăрмансем, шыв-шур – юлать пирĕн хыççăн? Вăрмансем кĕме çук ашкăрса кайрĕç, ялсене çĕнĕрен те çĕнĕ çырма-çатра çурать, малтанхисем татах та аслăланса-тарăнланса пыраççĕ, уй-хирсенче çамрăк хунавсем шăтма пуçлаççĕ те кăштахран пысăк катана-вăрманах çаврăнаççĕ, кÿлĕсем юшкăнпа тулса ларнăран вĕсенче шыва кĕме те май çук, пуллисем те ĕрчейми пулса пĕтеççĕ – акă мĕнле çутçанталăк хăваратпăр хамăр хыççăн.

Хими таварĕсем – полиэтилен тата ытти пластик-пластмасс – кулленхи пурнăçа кĕрсе вырнаçрĕç кăна мар, питĕ пысăк сиен кÿрекен япаласем пулса тăчĕç. Пластик савăтсем, полиэтилен хутаççем кашни кĕтесре купаланса выртаççĕ – вĕсене асăрхами те пултăмăр. Хамăр каннă çĕртех купи-купи пăрахса хăваратпăр, ара, тепĕр чухне урăх тĕле – тасарах вырăна – кайăпăр та, ĕçĕ те пĕтнĕ. Халĕ тата кĕпе-йĕме çеç мар, савăт-сапана та тĕрлĕ хими таварĕсемпе çума пуçларăмăр – çакă йăлтах тăван çĕрĕмĕре сăрхăнать, таврари шывсене юхса кĕрет.

Ачасем çинчен те пĕр-икĕ сăмах калам эппин. Никам та, паллах, хăйĕн тĕпренчĕкĕсене выçă лартмасть, çара уран çÿретмест. Анчах та ку çеç çителĕклех-ши? Ман шутпа, ачасене ытларах ырă туйăм парнелеме тăрăшмалла: пĕрле йĕлтĕрпе ярăнатпăр-и, пĕрле Шупашкара театра килсе каятпăр-и, пĕрле пĕр-пĕр конкурс валли ÿкерчĕк ÿкеретпĕр-и – анчах пĕрле. Çак ырă туйăмсем ыран вĕсем каялла таврăнĕç.

Ырана – калăпăр, 20–30 çул е ытларах та малаша – пăхар та, шухăша путар: ыран та паянхи пекех пулĕ-ши, паян эпир савăнса-киленсе пурăнакан япаласем-пулăмсем юлĕç-ши? Çав вăхăтрах çичĕ миллиардлă этемлĕх хушшинче пире çеç пырса тивекеннисем – чăваш чĕлхи, чăваш юррипе ташши, чăваш тĕрри, чăваш хаçачĕ-журналĕ, чăваш театрĕпе киновĕ – юлĕç-ши? Е 40–50 çул иртсен, тен, кăшт маларах та, «Эх, упраймарăмăр çав...» тесе хурланнипе куççуль тăкăпăр-и?

✎ Владислав НИКОЛАЕВ